# ÇАТРАКАССИНЧЕ — ЧИ ЧĂНКĂ КАЧЧĂСЕМ!

**Кашни çул тенĕ пекех Çатракасси вăтам шкулĕнче çарпа спорт уйăхлăхĕ иртет. Кăçал та яланхи пекех кăрлач уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа нарăс уйăхĕн вĕçĕчченех тăсăлчĕ. Шкулта тĕрлĕ-тĕрлĕ мероприятисем пулчĕç.**

Нарăсăн 5-мĕшĕнчен ачасен çар темипе çыхăннă ўкерчĕкĕсен курав-конкурсĕ ĕçлерĕ. 1-7-мĕш класра вĕренекенсем тĕрлĕ сăрăсемпе тăрăшсах ўкерчĕксем хатĕрлерĕç.

Нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче 1-4-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче КВН пулчĕ. Çав кунах тĕрлĕ сăвă, юрă тата ташă ăмăртçвĕсем иртрĕç. Пурте тенĕ пекех конкурссене çав тери аван хатĕрленнĕ.

5-8-мĕш класра вĕренекен арçын ачасем хушшинче хăйне евĕрлĕ ăс-тăн кĕрешĕвĕ иртрĕ. Чи маттурисем – 7-мĕшсем пулчĕç. Вĕсен «Рыцарь» команди 1-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Нарăсăн 16-мĕшĕнче 1-4-мĕш классем  çăварни уявларĕç. Уява савăнăçлă ирттерес тĕллевпе пуçламăш класри ачасем сăвăсем, çăварни юррисем, тĕрлĕ ташăсем вĕреннĕ, тутлă икерчĕсем пĕçернĕ. Авалхи йăлапа, уява çăварни катемпине çунтарнипе вĕçленчĕ. Çав кунах 9-11-мĕш классенчи яшсем хушшинче «Чи чăнкă каччă» ята илессишĕн хăватлă кĕрешӳ пулчĕ.  11-мĕшсем шкулта чи чăнкисем пулчĕç, пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕç.

Ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе шкул хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕллевпе нарăсăн 17-мĕшĕнче «Ашшĕ тата ывăлĕ» ятлă хăйне евĕрлĕ ăмăрту иртрĕ. Кунта та тĕрлĕ конкурссем пулчĕç. Музыка тата спорт конкурсĕсем уйрăмах асра юлчĕç. Ашшĕсемпе пĕрле ывăлĕсем мясорубка пуçтарчĕç, тĕрлĕ çимĕçсенчен апат хатĕрлерĕç. Тĕлĕнмелле! Темĕн те тума пĕлеççĕ. Чи маттури вара Семеновсен çемйи пулчĕ.



Ачасен асĕнче «Ашшĕ тата ывăлĕ» вăййă юлашки вăхăтра иртнĕ конкурссем хушшинче уйрăмах асра юлчĕ.

**Материала**
**Çатракасси шкулĕ**
**хатĕрленĕ.**

## ЕВГЕНИЙ БОРИСОВ ЯЧĔПЕ ИРТТЕРНĔ МИНИ-ФУТБОЛ ТУРНИРĔ

**Нарăс уйăхĕн 23—мĕшĕнче, Çĕршыва хӳтĕлекенсен кунĕнче, Тивĕш шкулĕнче Раççей паттăрĕн Евгений Борисов  ячĕпе мини-футбол турнирĕ иртрĕ. Унта Муркаш, Шупашкар, Красноармейски, Элĕк районĕсенчи тата Шупашкар хулинчен килнĕ 9 команда хутшăнчĕ.**

Ăмăртăва шкулăн спорт залĕнче савăнăçлă лару-тăрура уçнă. Пухăннисене Раççей Федерацийĕн паттăрĕ Евгений Борисов, Афган вăрçине хутшăнса сусăрланнă çынсен Чăваш Республикин обществăлла организацийĕн пуçлăхĕ Г.Матвеев, Тивĕш шкулĕн директорĕ В.Федотова Çĕршыва хӳтĕлекенсен кунĕ ячĕпе саламларĕç, турнира хутшăнакансене ăнăçу сунчĕç.

Тухса калаçакансен хушшинче ЧР футбол федерацийĕн ертӳçи В.Крысин, вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Леонид Мочалов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Данилов, Муркаш районĕн РОВД пуçлăхĕ Е.Макаров, чăваш телевиденийĕн информаци программисене ертсе пыраканĕ Олег Прокопьев, Муркаш ентешлĕхĕн ертӳçи Александр Федотов тата ытти хăнасем  пулчĕç.

Шăпа янă хыççăн  РФ паттăрĕн кубокĕшĕн хĕрӳллĕ кĕрешӳ пуçланчĕ. Финала Муркаш, «Чебоксарский мельник», Тивĕш тата «Центральный рынок» командисем тухрĕç.

Финал ăмăртăвĕсем хыççăн 1-мĕш вырăна «Центральный рынок», 2-мĕшне – Тивĕш, 3-мĕшне – «Чебоксарский мельник» командăсем тивĕçрĕç. Унсăр пуçне «Чи ăста гол кĕртекен» ята Алексей Софронов /Муркаш сали/, «Чи ăста вратарь» ята Николай Иванов/Тивĕш ялĕ/, «Чи ăста тапăнакан» ята Алексей Вохмин /Центральный рынок/ командăран», «Чи ăста хӳтĕлевçĕ» ята Олег Егоров /Тивĕш ялĕ/, «Чи çамрăк футболист» ята Сергей Кириллов /вăл Тивĕш шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренет/, «Чиаслă футболист» ята Олег Иванов /Тивĕш шкулĕнче физкультура вĕрентекенĕ/ илчĕç.

Юлашкинчен çĕнтерӳçĕсемпе ăмăртура палăрнисем Евгений Борисов аллинчен хисеп хучĕсемпе хаклă парнесем илчĕç. Чăваш паттăрĕ ăмăртăва пуçтарăннисене  тепĕр хут ырлăх-сывлăх, ăнăçу, телей сунчĕ, Çĕршыва хӳтĕлекенсен кунĕ ячĕпе саламларĕ.

## ТОЙКИЛТĔРЕ АЧАСЕН ЎКЕРЧĔКĔСЕН КУРАВ-КОНКУРСĔ

**Нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пуçламăш тата вăтам классенче вĕренекен ачасен ўкерчĕкĕсен курав-конкурсĕ ĕçлерĕ.**

Унăн тĕп тĕллевĕ — ачасене ўнер тĕнчипе паллаштарасси, пултаруллă ачасене тупса палăртасси. Курав хăйĕн тĕллевне пурнăçларĕ темелле. Ўкерчĕксене хаклакансем 3-мĕш класра вĕренекен Дмитрий Иванов, Аркадий Сергеев (3-мĕш кл.), Елена Саватеева (4-мĕш кл.), Вадим Васильев (6-мĕш кл.) тата Светлана Васильева (6-мĕш кл.) ĕçĕсене палăртрĕç. Ачасем çакăн евĕрлĕ куравсем ўлĕмрен те пуласса шанаççĕ. Шкул администрацийĕ çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесем пачĕ.

**Материала**
**Тойкилтĕ шкулĕ хатĕрленĕ**

## ЭХ, ÇĂВАРНИ, ÇĂВАРНИ!

**«Эх, çăварни, çăварни! Çăварни çитсен икерчи», - тесе юрлать чăваш çанталăк çуркунне енне сулăнсан.**

Çак уявран Шомик шкулĕ те аякра тăмарĕ. Нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕнче вĕсем иртенпех çăварни хатĕрленчĕç: лашапа кӳлнĕ çунасене тĕрлĕ тĕслĕ лентăсемпе, пурçăн тутăрсемпе илемлетрĕç, икерчĕсем пĕçерчĕç, çăварни юрри-ташшине аса илчĕç.

Акă  кĕтнĕ самант çитрĕ. Шомик ялĕ тăрăх купăс сасси янăрарĕ, таçта çитичченех ача-пăча кулли саланчĕ. Уявра пурте пур: шкул ачисем, вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕсем тата ял халăхĕ. Чăн-чăн çăварни çитнине кашни класс икерчĕ пĕçерсе палăртрĕ. Чи тутлă икерчĕсене 4-мĕш класра вĕренекен Ильян амăшĕ пĕçернĕ. Вĕсем çав тери тутлă!

Уяв çăварни катемпине çунтарса янипе вĕçленчĕ. Çулталăк хушшинче чир-чĕр ан ертĕр тесе уява килнĕ кашни çын асамлă кăвайт урлă сикме тăрăшрĕ. Чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, çăварни кăвайчĕ урлă сиксен ĕмĕтсем пурнăçланĕç. Чăн е суя — пĕлме çук. Анчах та вутçулăм урлă сиксе каçни кăмăла çĕклет, темĕнле шанăç парать.

Эх, çăварни, çăварни! Çав тери хăвăрт иртсе каятăн-çке. Чарăнса та тăмастăн. Анчах тем мар, тепĕр çул эсĕ татах килессе эпир шанатпăр, шанатпăр кăна мар, ĕненетпĕр те.

**Материала**
**Шомик шкулĕ**
**хатĕрленĕ**